Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ 2011 · ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII · ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMIX

77 (7931) № ✻ Юн кун, 2011 çулхи юпа (октябрь) уйăхĕн 5-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Шкулта – çамрăк педагогсем

**Паян – Учитель кунĕ**

***Чуманкассинчи вăтам шкул коллективĕ çулсерен çамрăкланса пырать. Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан виçĕ учитель сентябрĕн 1-мĕшĕнче кунта хăйсен ĕç биографине çырма тытăнчĕ. Наталия Валерьевна Аксендарова (сулахайри) хими урокĕсене ертсе пырать, Оксана Георгиевна Федотова вырăс чĕлхипе литературине вĕрентет, Анна Александровна Кириллова ачасене истори тата географи тĕнчипе паллаштарать.***

***Кăçал шкулта «Çамрăк педагог шкулĕ» ĕçлеме тытăнчĕ. Кунсăр пуçне вĕрентӳре пуян опыт пухнă учительсен ĕçĕ те куç умĕнчех. Апла çамрăк специалистсене професси вăрттăнлăхĕсене алла илсе пыма çăмăлрах пулĕ.***

***Шкулта вĕренекенсем вара паянхи уявпа кунта ĕçлекен пур учителе те, маларах ĕçленĕ педагогсене те ăшшăн саламлаççĕ. Çирĕп сывлăхпа такăр та вăрăм пурнăç çулĕ сунаççĕ. Учительсене тав сăмахĕ каласа вĕсене юратнине пĕлтереççĕ.***

***Т. ПАВЛОВА***
*сăн ӳкерчĕкĕ.*



## Ачасем хастар учительсене кăмăлласçĕ

***Вĕрентӳ сферинчи лару-тăрупа çĕнĕлĕхсене сӳтсе явма, пултаруллисене чыслама паян Муркаша районти хастар учительсем уява пухăнчĕç. Эпир вара маларах район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхне З.Ю. ДИПЛОМАТОВĂНА калаçăва чĕнтĕмĕр.***

**– Шкулсенче кадрсен ыйтăвĕ тухса тăмасть-и? Учительсен ăсталăхĕ мĕнле шайра?**

– Районти шкулсенче 355 учитель ĕçлет. Вĕсен ăсталăх шайне палăртса 270 педагог квалификаци категорине çирĕплетнĕ: аслă категорипе – 40 çын, 1 категорипе 168 çын, 2 категорипе 62 çын. Уйрăм педагогсен ĕçне Раççей шайĕнче те, республика шайĕнче те палăртнă. Çак шайсенчи наградăсене тивĕçнисем чылайăн.

Паянхи куна учительсенчен 227-шĕн педагогика ĕç стажĕ çирĕм е ытларах çулпа танлашать. Стаж пиллĕк çултан сахалраххисем вара 18 кăна. Пиллĕк-вунă çул ĕçлекенсем пурĕ 21 çын, вунă-çирĕм çул ĕçлекеннисем 89 çын. Тивĕçлĕ канăва тухнă 23 учитель паян уроксем ертсе пыраççĕ. Вĕсенчен ытларахăшĕ математика тата физика учителĕсем. Çавăнпа та кадрсен ыйтăвĕ пур. Хальхи вăхăтра акă информатика, ют çĕр-шыв чĕлхине вĕрентекен, физкультура, вырăс чĕлхи учителĕсем те кирлĕ.

**– Учителĕн паян мĕнле пулмалла?**

– Эпир çулсеренех ятарлă ыйтăм ирттеретпĕр. Ачасем акă ăс-тăн енчен вăйлă аталаннă, тĕрĕслĕхе шута хуракан, хутшăнусем тытса тăма пултаракан, ырă кăмăллă, творчествăлла ĕçлекен, конкуренцире мала тухма пултаракан хастар учительсене кăмăллаççĕ. Федераллă патшалăх вĕрентĕвĕн стандарчĕсенче те учитель çапла пулмаллине каланă. Кунсăр пуçне унта учителĕн паянхи пурнăçăн лару-тăрăвне ăнланмалла, решенисем хăвăрт йышăнма пĕлмелле, компьютерпа та çăмăллăнах ĕçлеме пултармалла.

**– Учитель «портретне» палăртрăмăр. Унăн ĕç укçи тата мĕнлерех?**

– Çулталăк пуçланнăранпа учительсен ĕç укçи хăпарчĕ. Июнь уйăхĕнче оклад 6,5 процент чухлĕ ӳсрĕ, сентябрĕн 1-мĕшĕнчен хавхалантару пайĕ 14,7 процент хăпарчĕ. Октябрьте ĕç укçине татах та ӳстерме палăртнă. Педагогсен ĕç укçин вăтам кăтартăвĕ республикăри экономика сферинчи ĕç укçин вăтам кăтартăвĕпе шайлашăнса 13 пин те 900 тенкĕпе танлашать.

Учительсем ачасене тĕрлĕ олимпиада-конкурса хатĕрленипе пĕрлех хăйсем те конкурссене хутшăнаççĕ, грантсем çĕнсе илеççĕ. Ку та хушма пулăшу.

**– Апла уяв кунĕнче хастаррисене ятран каласан та аван пулмалла.**

– В.И. Тихонов (Йӳçкасси шкулĕ), В.И. Алексеева (Оринин), А.Ю. Герасимова (Турай), Г.В. Смирнов (Шатракасси), В.Г. Львов (Муркаш шкулĕ), И.В. Семенов (Мăн Сĕнтĕр), Е.К. Михайлова (Муркаш шкулĕ) вĕрентекен ачасем çулсеренех республика, Раççей шайĕнчи олимпиадăсенче мала тухаççĕ. Пĕтĕмĕшле патшалăх экзаменĕсенчи кăтарту та учителĕн ĕçне кăтартать. Вырăс чĕлхипе акă Л.Ю. Краснова, А.В. Филиппова, Л.А. Волкова (Муркаш шкулĕ), Нискасси шкулĕнчи М.В. Данилова, Оринин шкулĕнчи В.В. Калинина вĕрентекен классем кăтартăвĕсемпе республикăри вăтам кăтартуран та иртеççĕ. Математикăпа А.Д. Максимовăпа В.Г. Смирнова асăнмалла (Муркаш шкулĕ), Нискасси шкулĕнче ĕçлекен З.Н. Мигушовăна, Оринин шкулĕнчи Т.П. Алексеевăна, Чуманкасси шкулĕнчи О.Н. Ивановăна.

Тепĕр ен – учительсем хăйсем конкурссене хутшăнса çĕнтерӳçĕсем пулни. Ку тĕлĕшпе Юнкăсене палăртас килет: Н.В. Шандимирова, И.Г. Илларионова, И.В. Киршева, Т.В. Ермакова. Вăрманкассинчи пуçламăш шкул-ача садĕнче тăрăшакан Г.Л. Пегасовăпа А.В. Корнеева та маттур. Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче вăй хуракан Л.В. Ванюшкина, Чуманкасси шкулĕнче ĕçлекен В.Н. Николаева, Шурча шкулĕнчи Н.В. Борзаева, Калайкассинчи Т.А. Ершова, Л.А. Митрофанова хореограф пултарулăхĕпе палăрса тăраççĕ. Çакăн пеккисем нумайрах пулччăрччĕ.

Самантпа усă курса вара паян пур учителе те, ветеран педагогсене те уявпа саламлас килет. Иксĕлми вăй-хал, çирĕп сывлăхпа вăрăм кун-çул сунатăп. Çамрăк ăру шăпишĕн яваплăха туйса, професси ăсталăхне ӳстерсе ĕçлеме вăй-хăват çиттĕр. Хăвăр профессие яланах юратăр, сире вара çынсем хисеплеччĕр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**ХАКЛĂ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!**

Учитель кунĕ ячĕпе сире пĕтĕм чунтан саламлатăп!

Кĕркуннехи çак çутă та янкăр кун эпир пĕтĕм халăх юратакан уява – Учитель кунне паллă тăватпăр. Педагог, воспитатель, наставник профессийĕ яланах чи хисеплĕ профессисенчен пĕри пулнă, ку халĕ те çаплах. Пире шухăшлама, ырăпа усала уйăрма, йывăрлăхсене парăнтарма вĕрентсе пынă çынсем яланах пирĕн асăмра.

Хальхи учителĕн тарăн пĕлӳ шайĕ пулни кăна çителĕксĕр. Вăл вĕрентĕвĕн чи çĕнĕ хатĕрĕсемпе методикисене алла илни, вăхăтпа тан пыни, обществăри тарăн улшăнусене ăса хывни кирлĕ. Чăваш Енре кун пеккисем ытларахăшĕ.

Эпир хамăр енчен учительсемпе вĕренекенсене пулăшма мĕн май пуррине пĕтĕмпех тăватпăр. Çĕнĕ шкулсем, ача сачĕсем хута каяççĕ, кивисене реконструкцилеççĕ, вĕсен пурлăхпа техника бази пуянланать. Чи лайăх вĕренекенсем республика Президенчĕн стипендийĕсене, учительсем грантсене тивĕçеççĕ. Кăçал учительсемпе шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсен воспитателĕсен ĕç укçи шайĕ палăрмаллах ӳсрĕ. Малашне те ку ĕçе туса пырăпăр.

Уйрăм тав сăмахĕ вĕрентӳ системин ветеранĕсене.

Пирĕн хисеплĕ учительсем! Чун ăшшишĕн тата профессионализмшăн, профессие тата ачасене парăннăшăн, иксĕлми энергишĕн тата тĕнчене лайăхрах тума тăрăшнăшăн сире тав сăмахĕ калатăп. Пурсăра та ырлăх, телей, çитĕнекен ăрăва воспитани парассинче ăнăçу сунатăп!

Уяв ячĕпе!

**М. ИГНАТЬЕВ,**
**Чăваш Республикин Президенчĕ.**

**ХИСЕПЛĔ УЧИТЕЛЬСЕМ, ВĔРЕНТӲ УЧРЕЖДЕНИЙĔСЕН ĔÇЧЕНĔСЕМ, ВОСПИТАТЕЛЬСЕМ, ПЕДАГОГИКА ĔÇĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире пурне те професси уявĕ – Учительсен кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Çăмăл мар, анчах сумлă та пархатарлă сирĕн ĕç. Район, республика, Раççей пуласлăхĕ мĕнле килесси йăлтах сирĕнпе, сирĕн ĕçĕрпе çыхăннă. Эсир çакна чун-чĕререн ăнланса ĕçлетĕр, ачасене тарăн пĕлӳ пама, вĕсем пурнăçра хăйсем вырăнне тупма пултарччăр тесе тăрăшатăр. Паянхи çамрăксем кирек епле лару-тăрура та чыса çухатман, нимĕнле йывăрлăха парăнман, чăн-чăн çынсем пулса усчĕр тесе тимлетĕр. Тавах сире çакăншăн.

Эсир пурнăç уттинчен те юлмастăр. Вĕрентӳ ĕçне çĕнĕ технологие çирĕппĕн кĕртсе пыратăр. Çакна валли вара районти шкулсенче условисем пур. Вĕрентӳ учрежденийĕсенче пурлăхпа техника бази палăрмаллах çирĕпленчĕ. Малтанхи çулсенче шкулсем компьютерсемпе пуянланчĕç пулсан, халĕ шкул пурнăçне интерактивлă доскасемпе электронлă дневниксем, журналсем кĕме пуçларĕç. Хăвăрăн пултарулăха та ӳстерсех пыратăр эсир. Малашне те пултарулăхпа пуçарулăх пĕрре те ан иксĕлтĕр сирĕнте.

Сире пурне те çирĕп сывлăх, телей, вăрăм кун-çул сунатăп. Ачасемшĕн эсир яланах юратнă учитель пулса юлăр. Хăвăрта та чун ăшши пĕрре те ан иксĕлтĕр. Хăвăр вĕрентекен кашни ача валли çиттĕр вăл. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтĕрсем çитсе, шухăшлани пурнăçланса пытăр. Умри çулăр яланах уçăлса пытăр.

**Ю. ИВАНОВ,**
**район администрацийĕн пуçлăхĕ.**

**Декабрĕн 4-мĕшĕ – пĕрлехи сасăлав кунĕ**

## Кандидатсем паллă

«Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин Чăваш Республикин регион уйрăмĕн вун çиччĕмĕш конференцийĕн виççĕмĕш тапхăрĕ Раççей Патшалăх Думин тата Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн суйлавĕ умĕнхи пĕтĕм ыйтăва татса пачĕ.

Партин Патшалăх Думин списокне камсене кĕртнине пĕлтеретпĕр. Списокра пĕрремĕш – Михаил Игнатьев. Йышра çавăн пекех – РФ Патшалăх Думин депутачĕ, Думăн ют çĕршывсен ĕçĕсен комитечĕн ертӳçи Константин Косачев, Президент перинаталь центрĕн тĕп врачĕ Алла Самойлова, федерацин Чăваш Енри тĕп инспекторĕ Руслан Тихонов, Вăрнарти аш-какай комбиначĕн генеральнăй директорĕ Юрий Попов, хăвăрт утассипе тĕнче чемпионки Олимпиада Иванова тата Раççей ФНСĕн Тĕп наукăпа тĕпчев тата шутлав центрĕн гендиректорĕн çумĕ Александр Баранов.

**Саламлатпăр**



Пирĕн хисеплĕ ĕçтеше, Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăх ертӳçинче вăй хуракан **Виталий Иосифович СЕМЕНОВА** сумлă юбилейпа ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, телей, ăнăçу пултăр ялан. Пурнăç çулĕ вăрăм та такăр килтĕр, чир-чĕр санран пăрăнса ирттĕр. Телей сирĕнпе яланах пĕрле çӳретĕр.

**Саламлаканĕсем: Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăх ĕçченĕсем.**

Хаклă та юратнă мăшăра, аттене, кукаçие – Сыпай ялĕнче пурăнакан **Анатолий Иванович КУДРЯШОВА** 60 çулхи юбилейпа ăшшăн саламлатпăр.

Пурăн ĕмĕр сывлăхпа кăна,
Ырă кăмăл ăшăттăр чунна,
Сывлăх пултăр мĕн ватăличчен,
Пурăнма сунатпăр çĕр çулччен.
Чун юратнă атте, асатте,
Эс салхуллă ан пул нихăçан,
Ăшшăн-ăшшăн кулса кĕтсе ил,
Телейпе, сывлăхпа эсĕ пурăн ялан.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ачисем, мăнукĕсем, хăтипе тăхлачисем.**

Пирĕн юратнă аннене, кукамайпа мамака – Шуркассинче пурăнакан **Зинаида Семеновна ТРОИЦКАЯНА** 75 çулхи сумлă юбилейпа ăшшăн саламлатпăр.

Тавах сана эсĕ пурришĕн, санăн ырă кăмăлушăн, чун ăшшишĕн. Сывлăху çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм та телейлĕ килтĕр. Ачусемпе мăнукусен пархатарне курмалла пултăр. Кĕрекӳ тăванран, сĕтелӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр. Турри сана чир-чĕртен сыхлатăр. Эпир сана юрататпăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕсемпе хĕрĕсем, кинĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем.**

Муркашра пурăнакан **Виталий Иосифович СЕМЕНОВА** 50 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн тата ăшшăн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, ăнăçу, телей, вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Çав кунах октябрĕн 4-мĕшĕнче унăн аппăшĕ Валентина Иосифовна СЕМЕНОВА хăйĕн çуралнă кунне паллă тăвать. Ăна та малашнехи пурнăçра мĕн пур ыррине кăна сунатпăр.



**Салампа: амăшĕ, ачисем, йăмăкĕ, аппăшĕ, тăванĕсем, тус-юлташĕсем.**

**УВАЖАЕМЫЕ ТРУЖЕНИКИ И ВЕТЕРАНЫ АГРОПРОМЫШЛЕННОГО КОМПЛЕКСА!**

**ЧРСПКК «Согласие»** и **СПКК первого уровня «Моргауши–Согласие»** сердечно поздравляет Вас с Днем работника сельского хозяйства и перерабатывающей промышленности!

Крепкого Вам здоровья, счастья, благополучия и новых трудовых свершений!

с.Моргауши, ул. Ленина, 38, тел.:6-21-54

Çавра сĕтел

# «Çиччĕ илтиччен пĕрре кур»

Çак кунсенче районти историпе краеведени музейĕнче Пĕтĕм тĕнчери туризм кунне халалланă анлă мероприяти пулчĕ. Ĕç саманчĕ сенкер пÿлĕмрен пуçланчĕ. Кунта Ильинкăри вăтам шкулта истори предметне ертсе пыракан И.А. Каргинăн «Çĕр тата çынсем» пысăк калăпăшлă фотокуравĕ вырнаçнă. Мĕн ачаранах фотоаппаратпа туслашнăскер ку тĕлĕшри вăрттăнлăха аван пĕлет. Тăтăшах тĕрлĕ çул çÿревре, куравра пулнипе кăсăклă кашни саманта сăн ÿкерчĕке куçарать, кирек епле пулăма та ĕмĕр асра хăварать. Унăн ăсталăхĕпе шкул ачисем те, ыттисем те хаваспах паллашрĕç.

Пирĕн пурнăç пĕр вырăнта тăмасть, çавна май тăтăшах çĕнĕ çул-йĕр шырама тата ăна вăя кĕртме тивет. Хальлĕхе районта туризм ыйтăвĕпе туллин ĕçлеймен пулин те çитес вăхăтра пурнăçламалли хăш-пĕр ĕçсене палăртнă. Пĕтĕмĕшле илсен вара тупăш илессипе туризм виççĕмĕш вырăн йышăнать. Туризм ĕçĕ тупăш кăна мар, чи малтан хамăр сывлăх, ĕмĕр асра юлмалли самант, анлă тавра курăм, йывăр шухăш-кăмăлтан хăтăлмалли мел тата ытти те.

Кашни çыннăн хăй несĕлне, тăрăхне аван пĕлмелле, çавна май вĕсемпе ыттисене паллаштарма пултармалла. Ку енĕпе вара пирĕн, Муркаш районĕн, хăпартланмалли тата килен-каякана каласа кăтартмалли, тĕпчемелли сахал мар. Район территорийĕ Атăл юхан шывĕн çÿллĕ сылтăм енче вырнаçни хăйне май илемлĕ тата туристсемшĕн илĕртÿллĕ. Çакă тата ытти ыйтусем тавра «Развитие туристических маршрутов в Моргаушском районе» темăпа çавра сĕтел калаçăвĕ пулчĕ. Ăна культура тата архив ĕçĕсен пайĕн ертÿçи А.Е. Андреева уçрĕ, вăлах ертсе пычĕ.

– Пирĕн районта турист похочĕсемпе экскурсисем ирттерме, çавăн пекех туризм бизнесне йĕркелеме пур условисем те çителĕклĕ. Апла пулсан малашне ку енĕпе çине тăрса ĕçлемелле, çамрăк ăрăвăн пуçаруллăрах пулмалла. Муркаш енĕн истори аваллăхĕ те пуян, тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ аваллăх палăкĕсем, монументсем, чиркÿсемпе музейсем сахал мар, – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов.

Район территорине кура виçĕ лаптăка уйăрнă. Вĕсенчен кашниех хăйне май илĕртÿллĕ. Юлашки вăхăтра Ильинкăпа Сĕнтĕр лаптăкĕ туристсене, археологсене ытларах та илĕртет. Ку тăрăхра Б.И. Гузовский музейĕ вырнаçнă, унта чăвашсен чи аслă юманĕ хÿтлĕх тупнă. Чылай малтан вара металл шăратмалли çичĕ кăмака е тата комплекс, хула ту пулнă.

– Пирĕнпе республика тата унăн тулашĕнчи тĕрлĕ интереслĕ çынсем кăсăкланни, хамăр аваллăх вăрттăнлăхне çĕклени хăпартлантарать. Ку зонăра археологи, геологи, палеонтологи объекчĕсем сахал мар. Акă пирĕн тăрăхра динозавр пуçĕн шăммине тупнă. Çакă вара пирĕн çынсемшĕн, паянхи пурнăçшăн хăйне майлă çĕнĕлĕх тата вăрттăнлăх, – терĕ Ильинка ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Ю.В. Перцев çавра сĕтел калаçăвне пухăннисене.

Районта туризм ĕçхĕлне ытларах вăй кĕртесси, унпа тĕллевлĕрех ĕçлесси – пирĕн пĕрлехи малашнехи утăм. Çавна май ку енĕпе Муркаш районне тĕпе хурса В.Г. Кудряшов муниципаллă икĕ проект çырнă, иккĕшĕ те Чăваш Республикин шайĕнче пĕрремĕш вырăна тивĕçнĕ. Вĕсенчен пĕри «Развитие инфраструктуры сельского туризма на территории Моргаушского района Чувашской Республики» – «Лучший муниципальный проект» номинаци çĕнтерÿçи пулнă.

– Кирек кам та пĕрре курнине ĕмĕрлĕхе асра хăварать, çавăнпа та пĕр япала пирки çичĕ хут илтни пĕлтерĕшлех те мар. Эпĕ чылайранпа туризм ыйтăвĕпе тачă ĕçлетĕп. Ытти çĕршывсенче вара ку ыйтăва мала хураççĕ. Çак тĕллевпе эпир те çине тăрса вăй хурсан хамăра çÿллĕрех шая хăпартăпăр, – терĕ Виталий Геннадьевич Кудряшов туризм ĕçĕ-хĕлĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулмаллине палăртса.

Муркаш районне тăтăшах çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенчи ăсчахсем, тĕпчевçĕсем килсе кураççĕ, йăли-йĕркипе паллашаççĕ. Акă нумаях пулмасть Вена университечĕн профессорĕ пирĕн тăрăхпа кăсăкланчĕ. Çавăн пекех Турци, Япони тата ытти çĕр-шывсенчен килеççĕ пирĕн йăх-несĕлсемпе кăсăкланма.

– Муркаш районĕ – паллă тăрăх. Чылай тĕпчевçĕ, çыравçă, ытти паллă çынсем пирĕн тăрăхран тухнă, тĕнчипе палăрнă. Эпир ăсчахсемпе çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕнче пулатпăр, çапах та Муркаш çĕрĕ пекки çук. Улăп тăприсем, хула тусем, ыттисем те сахал мар пирĕн, апла пулсан тĕпчемелли те, – терĕ Е.Е. Ерагин хамăр тăрăхпа хăпартланса, туризм ĕçне туллин ĕçлеттерни питĕ вырăнлă пуласса палăртса.

Çакăнта хутшăннă шкул ачисемшĕн кăсăкли кунта чылай пулчĕ. Вĕсем кунта илтнисĕр пуçне харпăр хăй куçĕпе «чĕрĕ кĕтес» те курчĕç. Музейăн пĕр пÿлĕмĕнче Ятман ялĕнчи Т.В. Малова уйрăм предпринимателĕн хăш-пĕр чĕр чунĕсем хÿтлĕх тупнă. Уйрăмах ачасем вĕсем патĕнчен хăпма пĕлмерĕç, халиччен курман тăватă уралла туссем хăйсем патне илĕртрĕç. Вăл хăй хуçалăхĕнче цесарка, декоративлă чăх, кролик, путене тата ытти халиччен курман-илтмен чылай тĕрлĕ чĕр чун усрать. Нумаях пулмасть Татьяна Викторовна ăратлă выльăхсен куравне хутшăнчĕ. Унта ăстаçă тăватă ылтăн, икĕ кĕмĕл медаль çĕнсе ыттисене тĕлĕнтерчĕ. Çавра сĕтеле хутшăнакансене вăл хăйĕн кăсăклă калаçăвĕпе татах та хăпартлантарса ячĕ. Ĕçлес, пурăнас текен çын валли чăнах та паян пур еннелле те çул уçă, патшалăх та ун йышшисене пулăшу алли тăсать.

Туризм – анлă пĕлтерĕшлĕ ĕç-хĕл, вăл тĕрлĕ енлĕ пулать, вĕсенчен пĕри ял туризмĕ (сельский туризм) пире çывăхрах та пулĕ. Туристсене хапăл тума тата вĕсене вăхăтлăх чарăнма пур енлĕ меллĕ кĕтес кирлĕ. Хăна çурчĕ йĕркелесси вара Татьяна Викторовнăшăн ют мар, халĕ вăл ку енĕпе ытларах та тимлеме палăртать, кăмăл тăвакансене хăй патне чĕнет.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Вăтă çынсен кунне çапла уявларăмăр

# Паян та ĕççĕр лармаççĕ

Раççей Федерацийĕнче Вăтă çынсен кунне 20 çула яхăн ĕнтĕ çулленех чыслăн паллă тăваççĕ. Çĕр-шыв аталанăвне, предприятисемпе организацисен экономика тĕреклĕхне пысăк тÿпе хывнă ĕç ветеранĕсем çакна тивĕç те. Вĕсене сумлăн чысласси – паянхи çамрăксем умĕнче тăракан яваплăх. Пире тулли пурнăç туса панăшăн аслă çыннăмăрсем умĕнче эпир ĕмĕрĕмĕр парăмра. Çавăнпа пирĕн тав сăмахĕ те вĕççĕр-хĕрсĕр.

Юпа уйăхĕн 1-мĕшĕнче ĕçпе вăрçă ветеранĕсен Каршлăхри интернат-çуртĕнче пурăнакансемпе кунта ĕçлекенсем те Вăтă çынсен кунне сумлăн уявларĕç. Ватлăх çулĕсенче пирĕн патăмăрта канлĕх тупнă кашни ветеранах хăй вăхăтĕнче пирĕн хальхи пурнăçшăн вăй-халне шеллемесĕр ĕçленĕшĕн паян манăн чĕререн тав сăмахĕ калас килет. Пурнăçра уявсем нумай. Анчах Вăтă çынсене уйрăммăн чыслани пĕлтерĕшлĕрех, вырăнлăрах. Раççей Федерацийĕнче çакна малти вырăна кăларнăшăн эпĕ чунтан савăнатăп.

Чунĕпе çирĕп, кăмăлĕпе тĕреклĕ асатте-асаннешĕн ватлăх тени ыранхи куна шанса пăхмалла мар тенипе танлашмасть. Пачах урăхла, вĕсене çутă шанчăкпа пурăнтарасси, ыранхи куна ырă туйăмсемпе пăхтарасси – пирĕн паянхи ĕç. Çапла шутларĕç «Ĕçпе вăрçă ветеранĕсен Каршлăхри интернат-çурчĕ» республикăри патшалăх учрежденийĕнче ĕçлекенсем. Шутларĕç те ĕмĕтсене ума кăларчĕç. Вăтă çынсен кунне халалласа ирттернĕ тĕл пулу-уявра ĕçпе вăрçă ветеранĕсем паян та пирĕншĕн пысăк пĕлтерĕшли куç умне яр уççăн тухрĕ. Вĕсен матурлăхĕпе сатурлăхĕ хăех уяв парни пулчĕ.

Интернат-çуртра пурăнакансен пурнăçне хăт, илем кĕртес тĕллевпе çак кун эпир хамăр патăмăрта пурăнакансем хушшинче шашкăлла выляссипе турнир ирттертĕмĕр. Шашка вăййипе туслисем активлă хутшăнчĕç унта. Кашни тĕл пулу пысăк хастарлăхпа иртрĕ. Спорт вăл çĕнтерÿçĕсĕр пулмасть. Шашка турнирĕнче ăсталăхпа палăрнă Н.П. Павлов ветерана çитекенни пулмарĕ.

Шашистсем вăй виçнĕ вăхăтра алă ĕç ăстисен выставки ĕçлерĕ. Кунта тăратнă ĕçсем те вĕсене вată çынсем мар, пуян пурнăç опычĕллĕ ĕçченсем пурнăçланине уççăн каларĕç. Тĕрленĕ тата çыхнă экспонатсем хушшинче интернатра пурăнаканнисенпе пĕрлех кунта ĕçлекенсен ĕçĕсем те нумай пулчĕç.

Епле уяв-ха вăл ташăюрăсăр? Çак кун пире савăк кĕвĕ-çемĕпе «Янаш» ансамбль артисчĕсем савăнтарчĕç. Аслă юлташăмăрсем умĕнче Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. Лаптев тухса калаçнине те ватăсем кăмăллăн итлерĕç.



«Пире манса кайманшăн сире пысăк тав. Шухăшланă ĕмĕтĕрсем пурнăçланса пыччăр» – терĕç вĕсем ял тăрăхĕн пуçлăхĕ хăйсен енче тата районта ватăсемпе епле ĕçлесе пыни пирки каласа парсан.

– Аслă ăру çыннисене тата вĕсен мухтавлă ĕçĕсене ялан асра тытассине эпир хамăрăн пĕрремĕш тивĕç тесе шутлатпăр. Вăл малашне те çаплах пулĕ, – терĕ ыйтусене хуравланă май Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. Лаптев.

Аслисен ырă пуçарăвне шкул ачисем хаваслă ташă-юрăпа илем кĕртрĕç. Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулта вĕренекенсем – интернат-çуртăн тăтăш хăнисем. Ку хутĕнче те вĕсен концерт программи вată çынсемшĕн пысăк парне вырăннех пулчĕ. Ачасен сăвви-юррине итлесе нумайăшĕ савăнăç куççулĕ кăларнине курсан ачасен тăрăшулăхĕ харама кайманни палăрчĕ.

Пирĕн патăмăрти ветерансем татах нумай çул таса-сывă пурăнасса эпир шанатпăр. Çакăншăн хамăртан мĕн килнине йăлтах тума шантаратпăр.

**В. КРЮЧКОВА,**
**ĕçпе вăрçă вĕтеранĕсен Каршлăхри интернат-çурчĕн ĕçченĕ.**

# Пĕрле савăнтăмăр

Москакасси ял тăрăхĕнче хисеплĕ ватăсене чысласси ырă йăлара. Кăçал та Вăтă çынсен кунне чаплăн паллă турăмăр. Сентябрĕн 30-мĕшĕнче Москакассинчи вăтам шкулта асатте-асаннесем йышлă пухăнчĕç. Малтан вĕсем шкул музейĕпе паллашрĕç. Кунти ĕçсем пурин кăмăлне те кайрĕç. Унта хăйсен сăн ÿкерчĕкĕсене курсан ватăсем питех те савăнчĕç.

Актовăй залра вĕсене малтанах Москакасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. Матросов ăшшăн саламласа канлĕ ватлăх та вăрăм кун-çул сунчĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ ячĕпе В. Лаврентьев сăмах каланине те уява пынисем кăмăллă итлерĕç. Москакасси шкулĕн ертÿçи И. Иванов, пенсионерсен совечĕн ертÿçи В. Беспалова сумлă ватăсене чунтан саламларĕç. Уявра юбилярсем нумай пулнăран тĕл пулу каçĕ вĕсене чысланипе иртсе пычĕ. Малтанах 95 çула çывхаракан Н.С. Беловăна саламласа парне парса чыс турăмăр. Хăйне те сăмах патăмăр. Неонила Степановна çак вăхăтра мĕн кăна курман, мĕн кăна чăтса ирттермен пулĕ? Çакăн пек хисеплĕ юбилярсем залра чылай пулчĕç. Кашниннех ăшă калаçу ирттертĕмĕр. Вĕсем пирĕн ыйтусем çине хаваспах хуравларĕç.

Пухăннисене саламласа Москакасси шкулĕнче вĕренекен Д. Макарова илемлĕ юрăсем шăрантарчĕ. Ташă ушкăнĕ ташăсемпе савăнтарчĕ. «Шуçăм» юрăпа ташă ушкăнĕн хĕрĕсем илемлĕ чăваш юррисемпе уява хăт кĕртрĕç.

Концерт вĕçленнĕ хыççăн пурне те столовăйне йыхравларăмăр, тутлă апат-çимĕçпе сăйларăмăр. Кунта та илемлĕ юрă-кĕвĕ пирĕнтен уйрăлмарĕ.

Уява хаваслă ирттерме пулăшнăшăн Москакасси ял тăрăхĕн пуçлăхне А. Матросова, «Заря» ООО директорне И. Терентьевăна, О. Шураев предпринимателе, Москакасси вăтам шкул директорне И. Иванова тав тăватпăр.

**Г. ГОЛУБЕВА,**
**Москакасси ял тăрăхĕнчи хĕрарăмсен канашĕн ертÿçи.**

В. Данилов парнисемшĕн вăй виçрĕç

# Сывă пурнăç йĕрки – чи лайăххи



Муркаш тăрăхĕнче сумлă спорт ăмăртăвĕсем сахал мар. Вĕсенчен пĕри – Муркашри тĕп больницăн тĕп врачĕн, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕн В.Г. Даниловăн парнисене çĕнсе илессишĕн ирттерекен ăмăрту.

Юпа уйăхĕн пĕрремĕш кунĕ çăмăрлă та ăмăр килчĕ. Апла пулин те Тойкилтĕри пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан тĕп шкулта çак кун спорт ăмăртăвĕ хаваслăн иртрĕ. Ачасем вун икĕ шкултан пухăнчĕç.

Владислав Григорьевич вĕренекенсене ăшшăн саламласа спорт юхăмĕпе çывăх пулнăшăн тав турĕ, пурне те ăнăçу сунчĕ. «Çирĕп сывлăхлă пулас тесен ачаранпах спортпа туслашмалла. Куллен тăрăшни, кун йĕркине çирĕп пăхăнни кăна ÿсĕм тума пулăшать. Спортри пĕчĕк çитĕнÿсем те хăйсем тĕллĕн килмеççĕ», – çапла сĕнÿсем пулчĕç унăн. Хисеплĕ врач хăй те ачаранпах физкультура урокĕсене юратса çÿренине, халĕ тивĕçлĕ канăва тухнă В.П. Терентьев педагог спорта юратма вĕрентнине тата хавхалантарса тăнине те аса илчĕ.

Ачасене ăнăçлă стартпа финиш сунакансем татах та пулчĕç: район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертÿçи В.Г. Никитин, Хорнуй ял тăрăхĕн пуçлăхĕ М.В. Колесникова, Тойкилтĕ шкулĕн директорĕ И.А. Сергеев тата ыттисем те.

Тойкилтĕ шкулĕ çывăхĕнчи асфальт çул çинче кăçалхипе ачасем виççĕмĕш хут старта тухрĕç. Чи пĕчĕккисен тупăшăвне сăнама интереслĕ пулчĕ. Мала тухас тесе питĕ хытă тăрăшрĕç вĕсем. Кашмашри Богдан Яриковпа Тойкилтĕри Георгий Петров хăвăртлăхпа палăрчĕç.

Малалла кашни ÿсĕмĕн хăйĕн старчĕ, хăйĕн финишĕ – 2001 çулта çуралнисенчен пуçласа 1994 çулта çуралнисем таранах. Арçын ачасемпе хĕр ачасем хушшинче чи вăйлисем çĕнтерÿçĕсем пулчĕç.

Пĕтĕмĕшле кăтартупа вара кубока Калайкассинчи вăтам шкул команди çĕнсе илчĕ. Иккĕмĕш вырăнта – Йÿçкассисем, виççĕмĕшĕнче – Çатракассинчи вăтам шкул команди.

Мала тухнă командăсем медальсене тата хаклă парнесене тивĕçрĕç, сертификатлă та пулчĕç. Чи кĕçĕннисем те парнесемсĕр юлмарĕç. Хăйĕн тăван шкулне В.Г. Данилов волейбол, баскетбол тата футбол мечĕкĕсем парнелерĕ **(сăн ÿкерчĕкре)**. Спорт уявне тивĕçлĕ шайра ирттерме пулăшнăшăн шкул директорĕ И.А. Сергеев спонсорсене те тав сăмахĕ каларĕ: «Ачасене хавхалантарас ĕçре пуçарулăх та пĕрле чухне вăйлăрах».

**Ю. ЕВСТАФЬЕВА, вĕрентекен.**

